**Ёнтĕ вăрман кашлать**

Ёнтĕ вăрман кашлать, вăрман кашлать,
Турат çумне турат хушас тет пуль.
Йăпатать те йĕкĕт хĕрне ачашлать,
Хĕрĕн ик куçĕнчен тумлать куççуль.

Умра авкаланать çул, тăсăлать.
Йывăççене сирсе ик еннелле.
Йĕкĕт кайма тухнă инçе çула,
Инçе çула — Хĕвелтухăçнелле.

Унта çĕршыв чикки ăна кĕтет,
Вăл сыхлама каять Тăван çĕрне.
Телейлĕ çул сунать хĕр йĕкĕте,
Йĕкĕт сывлăх сунать савнă хĕрне.

Йĕкĕт сывлăх сунать, телей сунать,
Хĕрне илме килетĕп, тет, хĕлле.
Хĕр хумханать, хĕрĕн чĕри çунать,
Хĕл кунĕччен епле-ши кĕтмелле?

Пуйăс сасă парать, ав, инçетрен,
Лавăçиваскатать пуйăс тĕлне.
Хĕр куçĕнче ачаш куççуль чĕтрет,
Савни ăшшăн шăлать ун куççульне.

Савни ăшшăн шăлать те ачашлать:
- Эп манмăп, эс те ан сивĕн, юрат...
Ёнтĕ вăрман кашлать, вăрман кашлать,
Турат çумне хушас тет пуль турат...

1939

*Уйăп, М. Ёнтĕ вăрман кашлать… : [сăвă] // Уйăп, М. Илĕртӳллĕ инçет : суйласа илнĕ сăвăсемпе поэма / М. Уйăп. – Шупашкар, 1972. – С. 62.*